Мркашри кирпĕч завочĕ ĕçлеме тытăннăранпа 35 çул çитнĕ май

# Салатма çур талăк, пуçтарма çулталăк

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

**– Юрий Иванович, кăштах хăвăрпа паллаштарсамăр.**

– Кунта ĕçлеме тытăниччен эпĕ Çĕнĕ Шупашкарти çакăн йышши заводрах ĕçленĕ. Халĕ те унтах пурăнатăп. Куллен хуларан ĕçе çӳретĕп. Кирпĕч туса кăларас ĕç маншăн çĕнĕлĕх мар. Ку производствăна эпĕ 6 çул хушши кирпĕч заводĕнче ĕçлесе аван пĕлсе çитнĕ.

**– Эсир Муркашри кирпĕч заводне ĕçлеме килсен сирĕн ума мĕнле ӳкерчĕк тухса тăчĕ-ха?**

– Тӳрех каламалла, лăплантаракан ӳкерчĕк мар. Завод хупăнасси патнех çитнĕччĕ, панкрута тухнипе пĕрехчĕ. Электроэнергишĕн, çут çанталăк газĕшĕн, налуксем тӳлессипе парăмсем пысăкчĕ. Производство çук, оборудованисене салатса-ватса пĕтернĕ, техника ĕçлемест. 40 çын ĕçрен тухса кайнăччĕ. Завод пурлăхĕ çине арест хунăччĕ. Вĕçĕмех прокуратурăна чĕнетчĕç. Бухгалтери ĕçченĕсем хĕл кунĕсенче пӳлĕмре шăнса ларатчĕç. Çĕнĕ техника пачах çук.

Суйса каламастăп, малтанах ку йывăрлăхран тухма пулать е пулмасть, производствăна йĕркелесе яма вăй çитерейретпĕр е çитерейместпĕр тесе те ыйту тăрса. Завода туянас текенсем Чулхуларан та, Хусантан та пулса. Анчах та ку çулпа каяс темерĕмĕр, завода ура çине тăратма, производствăна аталантарма майсем шырас терĕмĕр.



Кирпĕч суйласа купалакансен бригади ĕçре хастар.

**– Мĕнрен пуçăнтăр çак пысăк задачăна татса пама?**

– Декабрĕн 26-мĕшĕнче завода ĕçлеме чартăмăр. Лару-тăрăва тишкерсе хак парас, малашлăх çулĕсене уçăмлатас терĕмĕр. Анчах та çынсене ĕçлемен заводра тытса тăма май çук. Вĕсене ĕç вырăнĕ, ĕç укçи кирлĕ. Çавăнпа та, ĕçлекенсен тĕп вăйне çухатас мар тесе,

**Эпир сире сĕнетпĕр**
**М 75-100 керамика кирпĕчĕ, сортламанни, 1000 штукĕ – 4189 тенкĕ.**

вĕсене январь уйăхĕнче тӳлевлĕ административлă отпуска ятăмăр.

Малтанлăха пирĕн тĕп тĕллев укçа-тенкĕ тупасси пулчĕ. Кредитсем илме май килмерĕ. Панкрута тухнă предприятие мĕнле банк кредит пама килĕшĕ-ха? Етĕрнери кирпĕч завочĕ урлă илме шутларăмăр. Апла та май килмерĕ. Продукци сутас – вăл та пачах çук, реализацилесе пĕтернĕ ĕнтĕ.

Анчах пуçа усас темерĕмĕр, пур майсене те шута илме тăрăшрăмăр. Усси пулчĕ-пулчех. 1 миллион тенкĕ Етĕрнери кирпĕч заводĕнчен кредит илме май тупрăмăр. Пĕтĕм укçана заводра вăй хуракансене ĕç укçи парăмне тӳлесе татма ятăмăр. Унсăр май çук. Ĕç укçи тӳлеместĕн пулсан завода кам тавăрнĕ-ха? Хальхи вăхăтра вара квалификациллĕ кадрсене çухатса пĕтерни те катастрофăпа пĕрех. «Чувашагропромстрой» пĕрлешӳрен татах 3 миллион тенкĕ илме май килчĕ. Тинех вара сывлăш çавăрса ятăмăр, завода хута яма хал çитертĕмĕр. Çитменнине Етĕрне заводĕнчен экскаватор илсе килме май килчĕ. Пысăк тĕкĕ пулчĕ ку пирĕншĕн.

Çавна та каласа хăварасшăн. Заводра ĕçлекенсен тĕп пайне тӳлевлĕ отпуска ăсатрăмăр пулин те, механизаци службине вырăнтах хăвартăмăр. Вĕсем хĕлĕпех узелсемпе агрегатсене юсаса йĕркене кĕртессипе ĕçлерĕç. Эпир çăва тухнă тĕле продукци кăларма тытăнма тĕллев лартрăмăр. Мĕншĕн тесен строительство ĕçĕсен сезонĕ пуçланать, унччен ĕлкĕресех пулать. Çу кунĕсенче вара кирпĕч туянакансем пулаççех. Продукци пулсан вара укçа-тенкĕ те тупăнма кирлĕ.

Çапла вара май уйăхĕнче завода ĕçлеттерме тытăнтăмăр. Паллах, çăмăлах пулмарĕ. Çак йывăрлăхсенчен тухма Етĕрне заводĕнчен кирлĕ пулăшу илме май килнине ырăпа палăртса хăварас килет. Май уйăхĕн çурринче пĕрремĕш продукци кăларма тытăнтăмăр. Çапла вара ерипен производствăна аталантарса уралантарсах пытăмăр.

**Эпир сире сĕнетпĕр**
**М-100 керамика кирпĕчĕ, сортлани, 1000 штукĕ – 4366 тенкĕ.**

**– Камсем ытларах туянаççĕ-ха сирĕн продукцие халĕ?**



Пахалăхлă продукци пулĕ ял çыннисем валли.

– Хальхи вăхăтра продукцие туса кăларасси кăна мар, ăна ăçта тата епле вырнаçтарасси те шухăшлаттарать. Çавăнпа та эпир чи малтанах пахалăх çине тĕп тимлĕх уйăрас терĕмĕр. Пахалăхлă продукцие туянакансем те тупăнаççех. Рынок тапхăрĕ вĕт-ха.

Малтанхи вăхăтра пирĕн продукцие вырăнти, Çармăс Республикипе Шупашкар районĕнчи çынсемпе предприятисем ытларах туянатчĕç. Ку вара çителĕксĕр. Продукцие реализацилеме çĕнĕ клиентсем тупас пулать. Ку тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлерĕмĕр. Усси пулмарĕ мар. Пирĕн продукци патне Мускавран та, Владимир хулинчен те килме тытăнчĕç. Малтанхи вăхăтра пĕрер тата икшер автомашина кăна тĕрĕслев шучĕпе туянатчĕç. Кайран вара, пахалăх лайăххине кура, вĕсем пирĕн продукцие вĕçĕмех туянакан клиентсем пулса тăчĕç. Хальхи вăхăта илес пулсан, 5-6 фирмăпа çыхăнусем йĕркелесе ятăмăр, эпир туса кăларакан продукцин 95 процентĕ таран вĕсем туянаççĕ. Вырăнти строительство организацийĕсем те пирĕн продукцие хурламаççĕ. Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ, акă, çур миллион кирпĕч илме килĕшӳ турĕ.

**Эпир сире сĕнетпĕр**
**М-125 керамика кирпĕчĕ, сортлани, 1000 штукĕ – 4956 тенкĕ.**

**– Заводра паянхи лару-тăру еплерех-ха?**

– Завод ĕçлет пулсан, продукци те пулать. Продукци пулсан вара укçа та тупăнать. Ерипен пулсан та, майĕпен йĕркеллех ĕçлесе пыма пуçларăмăр. Кирпĕч хĕртмелли пĕрремĕш туннель кăмакине кăна ĕçлеттеретпĕр хальлĕхе. Кунпа пĕрлех тепĕр кăмакана юсассипе те ĕçсене туса пытăмăр. Юсавçăсен бригади ĕçсене пахалăхлă туса ирттерчĕ. Халĕ ĕнтĕ ку линие ĕçлеме хатĕрлесе çитертĕмĕр. Çĕнĕ çултан тытăнса продукцие икĕ линипе туса кăларма тытăнма пĕтĕмпех хатĕр. Хальхи вăхăта илес пулсан вара пĕр линипех кирпĕчпе тивĕçтерессипе заказсене тивĕçтерме ĕлкĕретпĕр. Çу кунĕсенче заказсем ытларах пулаççех. Ун чухне иккĕмĕш линие те ĕçлеттерме хатĕр.

Кирпĕч хĕртмелли кăмакасем валли Хусанти наукăпа тĕпчев институтĕнче заказ парса çĕнĕ горелкăсем вырнаçтартăмăр. Вĕсем унччен хисенчен палăрмаллах перекетлĕрех.

Столярсен цехне уçрăмăр. Иккĕн ĕçлеççĕ унта, хăйсен тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçлаççĕ.

Продукци пахалăхĕ пирки çавна каласа хăварасшăн. Хальхи вăхăтра бракпа тухакан продукци пĕтĕм продукцин 2,7 проценчĕпе танлашать. Производство технологийĕпе ăна 4 процент чухлĕ пăхса хунă. Эпир вара çынсене пахалăхлă продукципе ытларах тивĕçтерме тĕллев лартатпăр.

Пирĕн патри тăм пахалăхĕ те лайăх. Вăл хăйĕн сиплĕхĕпе палăрса тăрать. Унпа усă курса ревматизмран сипленекенсем те çук мар. Карьерти тăм запасне 2020 çулччен тапхăрлăх тĕпчесе хунă. Вăл тивĕçтерет. Çитменнине карьерĕ 3 километрта кăна. Çакă çунтармалли-сĕрмелли материалсем самай перекетлеме май парать.

Паянхи куна илсен, газшăн тата электроэнергишĕн налук тӳлессипе те парăмсем çук. Çитменнине вĕсене декабрь уйăхĕшĕн малалла тӳлесе хунă.

**– Хальхи вăхăтра çынсене тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлесе тăмасăр вырăнта сыхласа хăварма май çукки пурне те паллă. Ку ыйтăва мĕнле татса паратăр эсир?**

– Тĕрĕс ыйту. Анализ турăмăр, çынсене вĕсен ĕç укçи пачах урăхла пуласси пирки ăнлантарса патăмăр. Предприятире туса кăларакан продукцие реализацилесе илекен укçа-тенкĕн 28 процентне ĕç укçи тӳлеме яма йышăнтăмăр. Çын ĕçлет пулсан, тивĕçлĕ ĕç укçи илме пултартăр. Пĕрремĕш уйăх ĕçленĕ хыççăн ĕç укçи тӳлемелли процент шайне 29 процента çитертĕмĕр. Кайран – 30 процента.

**Эпир сире сĕнетпĕр**
**Кондициллĕ мар кирпĕч, 1000 штукĕ - 2891 тенкĕ.**



С.Н. Воробьева технологпа С.В. Иванова кирпĕч хĕртекен продукци пахалăхне тĕрĕслеççĕ.



В.С. Максимов заводра 1975 çултанпа. Хăйне шанса панă автобуса яланах юсавлă тытать.



Технологи кăмакисен газооператорĕнче Г.Г. Федотов тăрăшса ĕçлет.

Çавна каласа хăварасшăн. Завод хупăнасси патне çитнĕ май кунта ĕçлекенсем 104 çын кăна юлнăччĕ. Халĕ вĕсен йышĕ 167 çынна çитрĕ. Унччен ĕçрен тухса кайнисем каялла таврăнчĕç. Ĕçсене икĕ сменăпа йĕркеленĕ. Пĕрремĕш смена ирхи 8 сехетрен тытăнса 5 сехетчен, тепĕр смени каçхи 5 сехетрен тытăнса ирхи 1 сехетчен ĕçлет.

**Эпир сире сĕнетпĕр**
**Вак кирпĕч – 1 кубла метрĕ 607,7 тенкĕ.**

Ĕç укçи шайĕ пĕчĕк мар. Малтанхи вăхăтра йĕркеллĕ ĕçлеймерĕмĕр пулин те, кăçалхи 11 уйăхпа заводра уйăхри вăтам ĕç укçи 6130 тенкĕпе танлашрĕ. Ĕç нормине епле пурнăçланине кура уйăхсерен 10-12-шер пин тенкĕ ĕçлесе илекенсем те çук мар.



Тăм карьерĕнчи экскаваторщиксемпе водительсем.

**– 11 уйăхри производство кăтартăвĕсемпе паллаштараймăр-и?**

– Каларăм ĕнтĕ, çулталăк çурринчен кăна продукци кăларма тытăнтăмăр. Апла пулин те 4 миллион та 501 пин штук браксăр кирпĕч туса кăлартăмăр, 4 миллион та 765 пин штук кирпĕч реализацилерĕмĕр. Пĕтĕмпе вара 20 миллион та 223,9 пин тенкĕлĕх кирпĕч, 535,6 пин тенкĕлĕх вак чул сутрăмăр, 734,7 пин тенкĕлĕх транспорт услугисем патăмăр. 11 уйăх итогĕсемпе 300 пин тенкĕ тупăш илме пултартăмăр.

**– Юрий Иванович, камсене лайăх енчен палăртнă пулăттăр?**

– Рабочисене тĕрлĕ çĕртен автобуссемпе ĕçе илсе çӳрессине йĕркеленĕ. Сергей Яндимиркинпа Валерий Максимов хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлаççĕ. Геннадий Александров та пултаруллисенчен пĕри. Вăлах экскаваторщик та, водитель те, тракторпа та ĕçлеме пултарать. Строительсен кунĕ ячĕпе эпир ăна чыслама манмарăмăр.

Слесарьсен бригадине 50 процент таран çĕнетрĕмĕр. Йĕркеллех ĕçлеççĕ халĕ. Кран ĕçлеменччĕ. Вĕсем вăхăтра ăна хута яма пултарчĕç.

Крановщиксем те пирĕн пултаруллăскерсем. Виççĕшĕ те Вязовсем. Елена тата ашшĕпе ывăлĕ Николайпа Сергей Вязовсем ĕçре пултаруллă.

Бухгалтерсен штатне 80 процент таран çĕнетрĕмĕр. Халĕ тĕп бухгалтер пулса Раиса Антонова ĕçлет. Хăй вăл Хорнуй ялĕнчен. Шанса панă ĕçшĕн ответлăха çирĕп туять.

**– Сирĕн малашлăхри ĕмĕтĕр-тĕллевĕрсем пирки те пĕлес килет.**

– Плансем тата шухăшсем пĕчĕк мар. Проектпа пăхнă хăват пирĕн заводăн – çуллен 14 миллиона яхăн кирпĕч туса кăларасси. Çак кăтартăва эпир çитес çул çитме кирлĕ тесе шутлатăп.

Производствăна çĕнетсе пырасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Малашне çуллен пĕрер техника туянма майсем тупсан та япăх мар. Акă, халĕ пире çĕнĕ КамАЗ автомашина питех те кирлĕ. Чи малтанах хамăр продукцие Мускава тата ытти çĕре турттарма. Ыйтакансем пур. Кунсăр пуçне тата производствăна аталантарасси, çĕнĕ технологи процесĕсем ĕçе кĕртесси пирки те манмалла мар. Предприятире хальлĕхе столовăй ĕçлемест. Малашне ăна та ĕçе ямаллах. Оборудованисем туянма сахалтан та 500 пин тенкĕне яхăн кирлĕ пулать. Апла пулсан ĕçлемелле те ĕçлемелле.

**Эпир сире сĕнетпĕр**
**Пирĕн автотранспортпа усă курма пултаратăр. Пĕр майлă шутласан, пĕр километр пуçне 35 тенкĕ тӳлемелле.**

**– Юрий Иванович, юлашкинчен мĕн калас тетĕр?**

– Предприятире пĕрле ĕçлекенсене пысăк тав сăмахĕ кăна калама пултаратăп. Пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлесен, пулăшса пырсан кăна çитĕнӳсем тума пулать. Çакă вара пирĕн çук мар. Апла пулсан малашлăхри задачăсене те чиперех татса парасса шанатăп.

**Кăларăма В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**